çын килтĕрĕшне те, мăшăрне те хисеплемĕ. Арăму патне каçхине утиял айне кĕрсе выртни хисеплениие пĕлтермест, эсĕ хăвăн ўт-пĕвне çеç кантаратăн... Эс выльăх мар вĕт, çын, — хыттăн каларĕ Яков Гаврилович.

Студентсем А. Шабалина тата мĕнле туйсене пĕлни çинчен калама хистерĕç.

— Пĕлместĕп, юлташсем... Мĕн пĕлнине каларăм ĕнтĕ... — хĕрелсе ответлерĕ вĕсене студент.

— Яков Гаврилович, — К. Ваншенкинпа И. Ганибин пĕр харăс тенĕ пек персе ячĕç. — Эпир илтнĕ тăрăх туйсен ячĕсем питĕ нумай...

— Кунта сире Водовозов профессор вĕрентет, Юрий Соколов фольклорист мăшăрĕ Дынник вĕрентет... ыйтăр, тĕпчĕр вĕсенчен... Эсир чăн-чăн çыракансем пулсассăн, — Литинститутра хăш-хăш профессор вĕрентнине пĕлет иккен Яков Гаврилович.

— Çавах та, Яков Гаврилович, хăвăр миçе туй пирки пĕлетĕр? — хĕрсе кайрĕç студентсем.

— Эпĕ кăштах калăп, ыттине хăвăр тĕпчĕр, пĕлĕр.. Юрать-и? — кăмăлĕ çемĕçрĕ халăх поэчĕн. — Эпĕ чăвашсем калана пек калатăп, Георги подстрочник туса пырĕ, — шўтлеме пăхрĕ Я. Ухсай. — Акă, пĕр çул пурăннă хыççăн — Пир туйĕ пулать, мăшăрсем пĕрне пĕри алшăлли е урăх япала парнелеççĕ. Хут туй — ку икĕ çул пурăннă хыççăн. Йывăç туй—пилĕк çул пĕрле пурăнсан уявлаççĕ. Пăхăр туй çичĕ çултан пулать, пĕрне-пĕри пăхăр укçа параççĕ. Кĕмĕл туй пирки хăвăр асăнтăр, шурă пўс туйĕ—вăтăр пилĕк çултан ирттереççĕ. Чи юлашкинчен вара — çитмĕл пилĕк çул пĕрле пурăнакансем те пулаççĕ, — чăвашсем куна Патша туйĕ теççĕ, — вырăсла «Коронная» ятлăччĕ пулас? Тĕрĕслĕр... — йăл кулса илчĕ Яков Гаврилович.

Чăваш халăх поэчĕ, чăннипех те, темĕн те пĕлетчĕ. Унпа калаçнă чухне пĕр-пĕр энциклопедие вуланăн туйăнатчĕ.

Пĕр каçхине театра та кайса килтĕмĕр.

Эпĕ МХАТа çўреме юрататтăм. Вăл театрти артистсене питĕ килĕштереттĕм. А. П. Чеховăн «Три сестры», А. Корнейчукăн «Платон Кречет», М. Булгаковăн «Последние дни» («Пушкин») тата ытти спектакльсене курнăччĕ ĕнтĕ. Вăл çулсенче МХАТа билетсем туянма питĕ йывăрччĕ. Çавăнпа эпĕ пĕр уйăх малтан тенĕ пек «Анна Каренина» спектакле кайса курма икĕ билет илсе хунăччĕ. Халĕ вара илнĕ билетсене каялла кайса парас-и? Эпĕ Я. Ухсая: «Театра каймăпăр-и?» тесе сĕнтĕм. Вăл килĕшрĕ.

Ун чухне МХАТ çурчĕ пĕрре çеçчĕ-ха. Театр умне вăхăтра çитрĕмĕр. Кĕтĕмĕр. Хамăр вырăнсене лартăмăр. Анна Каренина ролĕнче — СССР халăх артистки Алла Константиновна Тарасова, Вронский ролĕнче — Прудкин.

Спектакле питĕ тимлесе пăхрĕ Яков Гаврилович. Акă, Анна Каренина хăй ывăлĕ Сережăпа тĕл пулать. Питĕ пăлхантаракан сцена. Эпĕ йăпăрт Я. Ухсай еннелле пăхатăп: сăвăçăн кăмăлĕ хуçăлнă, вăл куççульленнĕ. Кун пеккине курманччĕ-ха эпĕ.

— Сцена çинелле пăх, мана пăхма... артист мар вĕт... — пăшăлтатрĕ Яков Гаврилович. Куçĕ шывланнине кăтартасшăн мар иккен.

Театртан тухсан, общежитинелле утнă чух, сăвăç чылайччен чĕмсĕррĕн пычĕ. Чылайран тин:

— Толстой çырнине Толстойла вылякан артистсем пурришĕн савăнмалла... Артист çын чунне витерет пулсан, артист вара... пысăк артист, — тесе хучĕ. — Мускавра чух, Георги, кун пек театрсене çўре, — пирус туртса ячĕ, общежитие çитиччен те тек шарламарĕ.

Тăваттăмĕш кунне, кăнтăр апачĕ çисен, — пĕрле апатлантăмăр, общежитие таврăнтăмăр та, манăн тумбочка çинче хут выртать. Унта: «Яков или Георгий! Завтра приезжает Мария Дмитриевна. Встречайте. С уважением Б. Иринин», тенине вуларăмăр.

Эпир Воровский урамне, СССР писателĕсен Союзне кайрăмăр. Унта тўрех Лихтентул патне кĕчĕ Яков Гаврилович. (Лихтентулăн ячĕпе ашшĕ ятне астумастăп.) Вăл ун чухне писательсене чукун çул, авиабилечĕсем туянса паратчĕ, гостиницăсене вырнаçтаратчĕ. Вăл тума пултарайман ĕç çук пек туйăнатчĕ, пултаруллă çынччĕ.

Гостиница пирки те каласса таталчĕç. «Балчуг» хăна килне çитсе вырнаçрĕ Я. Ухсай.

— Ирхине пуйăс килнĕ тĕле хăвах тухатăн пуль, Яков Гаврилович? — ыйтрăм эпĕ унран.

— Хамах каятăп... Килсе лар, Георги. Чăрмантартăм, тавах сана, студентусене ырлăх-сывлăх сун... Аван ачасем, — терĕ мана алă парса халăх сăвăçĕ.

Вăл ывăнни сисĕнетчĕ. «Кайса илтĕр», тесе тухса кайрăм эпĕ пўлĕмрен.

... Манпа пĕр пўлĕмре пурăнакан юлташăмсем ялан ырăпа асăнатчĕç Я. Ухсая. Шупашкара ман урлă салам та каласа яратчĕç. Э-э... Борис Иринина, кивçен илнĕ укçине, вăхăтрах кайса патăм.

«Балчуг» гостиницăна каяс мар терĕм. Мĕн чăрмантарса çўрес? Вĕсем — иккĕн. Мускавра вĕсен тусĕсем те нумай....



